24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ЯНВАРЬ 14 ЮНКУН 11 (6036) №

# Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

## Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă уява çĕнĕ ÿсĕмсемпе кĕтсе илер

Совет халăхĕн ирĕклĕхшĕн пыракан аслă вăрçи çĕнĕ тапхăра кĕчĕ. Мухтавлă Хĕрлĕ Çар фронтăн чылай участокĕсенче наступлени тума пуçларĕ. Юлашки вăхăтра вăл фашистла тискер кайăксене хăватлă пыра-пыра çапать. Нимĕç захватчикĕсем шăлĕсене шатăртаттарса, хĕвеланăç енелле [illegible] пыраççĕ. Гитлерла [illegible] пирĕн нумай хуласемпе ялсене ирĕке кăларнă.

Хĕрлĕ Çарăн кашни çĕнтерĕвĕ пире вăйсăр савăнтарать. Фронтри тăвансене, юлташсене, туссене тата ытларах хисеплесе кăмăла çĕклет. Тылри кашни çамрăк вĕсене тĕреклĕ пулăшу парасшăн тăрăшать. Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсене Сталин юлташăн «Йăлтах фронт валли, йăлтах çĕнтерÿ валли» тенĕ лозунгне пурнăçласа çамрăксем çĕнĕ ĕçпе парасçĕ.

Чăваш республикинчи предприятисенче, учрежденисенче, колхозсенче çамрăксем те, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, хăйсене ĕçре кăтартма тăрăшаççĕ. Çамрăксен пуçарăвĕ тăрăх вăрçă вăхăтĕнчи стахановецсен-двухсотниксен, трехсотниксен движенийĕ сарăлсах пырать.

Улатăрти паровозсем юсакан, Канашри вагонсем юсакан заводсенче, республикăри тата ытти предприятисенче, колхозсенче [illegible] ĕçлекен комсомолецсемпе çамрăксем хушшинче нормăна [illegible] хут ирттерсе тултаракансем шучĕ ÿсет. [illegible] çамрăк хĕрарăмсем «специальноçсене» вĕренсе, [illegible] производство станокĕсем умне тăраççĕ. Вĕсем фронт валли кирлĕ япаласене туса кăларас тĕлĕшпе нумай [illegible].

Республикăри çамрăксем фронтри пек ĕçлеме тăрăшаççĕ. Нумай пулмасть, Канашри вагонсем юсакан заводри комсомолецсемпе çамрăксем, Горькири Молотов ячĕпе тăракан автозаводри комсомолецсенчен пример илсе, ятарласа 5 фронтовой бригада организацилерĕç. Канаш станцинчи депори комсомолецсемпе çамрăксем те фронтовой бригада тунă. Заводри фронтовой бригада хăйĕн малтанхи паха ĕçĕсене кăтартрĕ те ĕнтĕ. Вĕсем К—0142 паровоза 3 талăкра юсаса цехран кăларас вырăнне 10 сехетрех юсаса пĕтерне. Бригадăн членĕсем 300—400-шер процент тултарса ĕçленĕ.

Республикăри комсомолецсемпе çамрăксем çĕршыв оборонине тĕреклетес тĕлĕшпе хастарлă ĕçлерĕç. Воскресниксенче ĕçлесе илнĕ çĕршер пин тенкĕ оборона фондне пачĕç.

Октябрьски районри «Большевик» промартельри комсомолецсемпе çамрăксем пуçарнипе, республикăра ĕçыннисем «Комсомол Чувашии» ятлă бронепоезда тума 1.053.691 тенкĕ укçа пухрĕç.

Совет халăхĕ юратнă Хĕрлĕ Çара активлăн пулăшнине пула пирĕн вăйсем ÿссе, тĕрекленсе пычĕç. Пирĕн Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе командирĕсем йывăр испытанисем витĕр тухса отечественнăй вăрçăн вут-хĕмĕнче пиçĕхсе çитрĕç. Çавăнпа вĕсем тăшмана пысăк çухатусем тÿстерчĕç. Анчах ку таранччен тунă çитĕнÿсемпе лăпланса ларма ир-ха. Тăшман вăйлă, килес кунсенче татах та вăйлă та хаяр çапăçусем нумай пулĕç. Çакна кашни çамрăкăн асра тытмалла. Апла пулсан, ĕçĕн хăвăртлăхне вăйсăрлатмалла мар, йăлтах урăхла, фронт валли татах та ытларах продукци туса кăларас тĕлĕшпе кашни çамрăкăн е ĕçсен бригадин, хăйсем çине конкретлă обязательствăсем илсе, вĕсене пурнăçлассишĕн çине тăрса кĕрешмелле.

Ĕнер пирĕн хаçатра Сталин ячĕпе тăракан автозаводри комсомолецсемпе çамрăксен Совет Союзĕнчи мĕнпур çамрăксем патне янă çырăвĕ пичетленсе тухрĕ.

Сталин ячĕпе тăракан автозаводри комсомолецсемпе çамрăксем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă тĕле хăйсен ĕçне лайăхлатас, фронта пулăшассине вăйлатас тĕллевпе хăйсем çине илсе ĕçлеме тытăннă.

Комсомолецсемпе çамрăксем пуçарнипе заводăн пĕтĕм коллективĕ ырласа, хăй çине конкретлă обязательствăсем илнĕ.

Заводри рабочисем февралĕн 23-мĕш тĕлне фронт валли плантан ирттерсе тăватă дивизие хĕçпăшаллантармалла çителĕклĕ специальнăй хĕçпăшал, [illegible] дивизие хĕçпăшаллантарма çителĕклĕ урăх тĕрлĕ хĕçпăшал туса хатĕрлеме сăмах панă. Ытти тĕрлĕ продукци кăларас тĕлĕшпе производство планне [illegible] 10 процент ирттерсе тултарма, электроэнерги, 1941 çулти [illegible] уйăхĕнчи нормăсемпе танлаштарсан, 10 процентран кая мар перекетлеме пулнă.

Çак пысăк обязательствăсене пурнăçа кĕртес тесе, автозаводра ĕçлекен комсомолецсемпе çамрăксем хăйсен нормисене 150-шар процентран кая мар тултарса пыма [illegible] илнĕ.

Февралĕн 23-мĕш тĕлне заводри двухсотниксен хисепне икĕ хут ÿстерме килĕшнĕ. Январĕн 15-мĕшĕнче [illegible] рационализаторсен [illegible] февралĕн 23-мĕшне [illegible] 100 боец тата [illegible] 50 [illegible] тултарса пыраççĕ.

Автозаводри комсомолецсемпе çамрăксен çÿлте асăннă коллективлă обязательствисене пурнăçлас тесе цехсенчи бригадăсем, [illegible] рабочисем хăйсем çине уйрăм обязательствăсем илнĕ. Самахран, Будков юлташ ертсе пыракан комсомолецсемпе çамрăксен бригади фронт заказĕсене пурнăçа кĕртнĕ чухне производство нормине кунсеренех сахалтан та виçшер хут ирттерсе тултарса пыма сăмах панă. Поляков, Мешков, Зайцев комсомолецсем тата ытти юлташсем те производство нормине 300 процентран кая мар тултарса пыма обязательство илнĕ.

Хăйсем çине илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртес тесе, заводăн мĕнпур коллективĕ февралĕн 23-мĕшчен сталинла вахтăна тăнă.

Сталин ячĕпе тăракан автозаводри комсомолецсемпе çамрăксем паха ĕç пуçарнă. Вĕсем хамăр çĕршыври мĕнпур çамрăксене хăйсенчен пример илме чĕнеççĕ.

Пирĕн республикăри комсомолецсемпе çамрăксен, автозаводри çамрăксен чĕнĕвне хутсе-явса, вĕсенчен пример илмелле. Заводсенче, предприятисенче çамрăксенчен ятарласа бригадăсем организацилемелле. Унтан кашни бригада, кашни çамрăк хăй çине конкретнăй обязательство илессине йĕркелемелле. Обязательствăсене пурнăçа кĕртес ĕçре социализмлă ăмăрту пысăк вырăн йышăннине шута илсе, ăна анлăн сарса ямалла.

Производствăри кашни коллектив, кашни фабрикăри, заводри, учрежденири, учебнăй заведенири комсомолецсемпе çамрăксем, кашни пионер хăйсем çине социализмлă обязательствăсем илме тивĕçлĕ. Харпăрхăй çине илнĕ обязательствăна пурнăçа кĕртни тата ирттерсе пурнăçа кĕртни Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа панă парне пулĕ. Фронт валли хамăрăн вăхăта та, вăя та шеллер мар.

Республикăри кашни çамрăк, кашни ĕçынни харпăрхăй çине конкретнăй обязательствăсем илтĕр, вĕсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрештĕр. Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнине производствăра çĕнĕ çĕнтерÿсем тунипе кĕтсе илер, фронта пулăшассине вăйлатар, ылханлă тăшмана аркатса тăкассине хăвăртлатар!

## Учительсен районри канашлăвĕ

ÇĔРПУ. (Телефон тăрăх). Январĕн 11-мĕшĕнче Çĕрпÿре учительсен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура районри çутĕç пайĕн заведующийĕ П. Андроев юлташ шкулсем Сталин юлташ лартнă задачăсене мĕнле пурнăçа кĕртсе пыни çинчен доклад туса пачĕ.

Доклад тăрăх тухса каланă учительсем хăйсен шкулĕсенчи воспитани ĕçĕ мĕнле пынине тишкерсе тухрĕç. Тишкерÿрен—нумай учительсем обществăллă ĕçе активлăн хутшăнни, хуçалăхпа политикăллă кампанисене ăнăçлăн ирттересе енĕпе тĕрăшса ĕçлени паларчĕ. Анчах та çак хушăрах хăшпĕрисем [illegible] вĕрене тăракан хĕрÿ ĕçсенчен [illegible] юлма пăхаканнисем те пур-ха. Ун пек обществăллă ĕçрен юпшăнса тăраканнисем çине совет учителĕсен йышĕ кăмăлсăррăн пăхать, çав вăхăтрах вĕсене халăх хушшинчи ĕçсене активлăн явăçтарма кирлĕ тесе шутлать.

Доклад тăрăх тухса каланисене итленĕ хыççăн канашлу учительсен массисен çывăх вăхăтри задачисене кăтартса паракан резолюци йышăнчĕ.

— Шкулсенчи ĕç дисциплинине татах та çирĕплетмелле, воспитани ĕçне ÿстермелле, çарпа физкультура ĕçĕсене вăйлатмалла,—тенĕ резолюцире, учительсен ĕçĕнчи хăшпĕр çитменлĕхсене кăтартса парса. Малалла вĕренекенсене обществăллă ĕçе лайăхрах хутшăнтарма кирлине кăтартса панă:

— Шкулти физкультура ĕçне вăйлатмалла, вĕренекенсене обществăллă ĕçе ытларах явăçтармалла, комсомолецсемпе çамрăксен республикăри кроссне тĕплĕн хатĕрленмелле тата аслă классенче вĕренекенсене çуракине хатĕрленес ĕçе хутшăнтармалла.

Резолюцие каланисене учительсем пĕр шухăш-кăмăллă пулса йышăнчĕç. Канашлу активлăн иртрĕ.

Г. ПЕТРОВ.

## Совет Информаци Бюровĕнчен

### Январĕн 12-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Январĕн 12-мĕшĕнче фронтăн чылай участокĕсенче пирĕн войскăсем противника хирĕç вăйлăн çапăçнă тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Январĕн 11-мĕшĕнче нимĕçсенне 12 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 3 самолет пĕтнĕ.

Январĕн 12-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсенне 3 самолет персе антарнă.

* * *

Январĕн 11-мĕшĕнче пирĕн пĕр авиачасть тăшманăнне 3 танк, пехотăпа грузсем турттарса пыракан 130 ытла автомашина, 3 орудие прислугипе пĕрле, боеприпассем тиенĕ 50 лава, горючи тултарнă автоцистернăна пĕтерсе тăкнă, чугунçул çинчи 16 вагона вут тĕртсе çунтарса янă, боеприпассен икĕ складне взрыв туса сирпĕнтернĕ, противник пехотин 2 батальонне сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Железнов юлташăн боецĕсем (Хĕвеланăç фрончĕ), противника хирĕç икĕ кун хушши хаяррăн çапăçса, халăх пурăнакан 7 пунктран нимĕçсене çапса кăларнă тата пĕр оруди, 20 пулемет, 5 автомашина, куçса çÿрекен 17 радиостанци, снарядсемпе патронсем нумай тытса илнĕ. Çапăçу хирне нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсен 220 вилли выртса юлнă.

* * *

Парфенюк юлташăн летчикĕсем (Ленинград фрончĕ), тăшман аэродромĕ çине ăнăçлăн вĕçсе пырса тапăнса, нимĕçсенне 12 самолет пĕтерсе тăкнă.

* * *

Гудков юлташăн подразделенийĕ (Хĕвеланăç фрончĕ), кĕтмен çĕртен атака туса, пĕр чугунçул разъездне тата нимĕçсен çул çинчи çар эшелонне тытса илнĕ. Тытса илнĕ трофейăсем хушшинче — хĕçпăшалпа боеприпассем тиенĕ 11 вагон. Эшелона сыхласа пыракан хуралран нимĕçсен 12 салтакĕ тыткăна парăннă.

* * *

Артиллери чаçĕн командирĕ Зимин юлташ çапăçăвăн чи татăклă самантĕнче оруди умне тăнă та тăшманăн 2 танкне тата противникăн темиçе огневой точкине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Запорожьери партизансен 2 отрячĕ Б. ял çине пырса тапăннă, унта нимĕçсен отрячĕ каç выртма вырнаçнă пулнă. Гитлеровецсем çине пăшалсенчен персе тăнă хыççăн партизансем штыкпа тăрса атакăна ыткăннă. Çĕрлехи çапăçура партизансем 61 фашиста вĕлерсе пĕтернĕ, вĕсенчен 11-ĕшĕ офицерсем пулнă.

* * *

Нимĕçсен 183-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 351-мĕш полкран тыткăна лекнĕ салтак Пауль Хаварт çапла каласа панă: «Эпĕ фронта, резерври 374-мĕш батальон составĕнче тăрса, декабрĕн 21-мĕшĕнче çитрĕм. Тăватă кун хушши пынă çапăçусенче пирĕн батальона пĕтĕмĕшпех аркатса тăкрĕç, батальон хăйĕн составĕнчен 80 процент çухатрĕ. Батальон юлашкийĕсем хăраса ÿксе нимĕне пĕлмесĕр каялла чакрĕç. Çапăçу пуçланиччченех тăватă талăк хушши пирĕн батальон нимĕнле апат-çимĕç те илмен. Пирĕн батальонри салтаксем çар ĕçне мĕнпурĕ те 4 эрне хушши кăна вĕреннĕ. Салтаксен шухăш-кăмăлĕсем пит те начар. Российăна хирĕç пыракан вăрçа эпир чăтса ирттерес çук, теççĕ вĕсем хăйсем хушшинче».

* * *

Нимĕçсен 2-мĕш горно-егерьски дивизийĕнчи 137-мĕш полкран тыткăна лекнĕ салтаксем çапла каласа панă: нумаях пулмасть çав полк командирĕ подполковник фон-Хейнкель панă приказ тăрăх пĕрремĕш батальонра 3 салтака персе пăрахнă. Çав салтаксен мĕнпур айăпĕ те çакăн пек пулнă: вĕсем обер-лейтенанта хăйсене тахçанах улăштарса канма илсе тухма сăмах пани çинчен астутарма хăйнă. Салтаксем çапла каланă: пирĕн текех чăтма вăй та çук, пирĕн пурин те пĕр шухăш кăна — киле тавăрăнасси, тенĕ. Çак ыйтăва хирĕç ответ илес вырăнне вĕсем пуля туянчĕç. Вĕсене çапла пĕтерсе тăкас ĕç Лица юханшывĕ хĕрринчи землянкăра пулса иртрĕ, тенĕ.

* * *

Мускав облаçĕн Высоконичи районĕнчи Теньково ялĕнче гитлеровецсем Сафоновсене—амăшпе хĕрне персе пăрахнă. Вĕсене Сафоновсен пĕчĕк ачи нимĕç салтакĕн посылкине илнĕ пуль тесе айăпланă. Сафоновсен виллисене урама кăларса ывăтнă. Çав виллесене пĕр уйăх хушши тирпейлесе пытарма ирĕк паман. Сафонова хĕрарăмăн 4 пĕчĕк ачи тăлăха юлнă.

* * *

Эссенри (Германия) çар завочĕсенчен пĕринче юлашки çул хушшинче пулнă инкексен шучĕ 40 хут ытла ÿссе кайнă. Пĕлтернĕ тăрăх, çав инкексенчен нумайĕшĕсем аш-какайпа çусем пачах çуккипе çисе тăранмалăх тăтăшах апат курман пирки рабочисем ытла та халран кайнипе пулса пыраççĕ.

### Январĕн 13-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Январĕн 13-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтăн чылай участокĕсенче пирĕн войскăсем активлă çапăçусем туса пынă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн танковăй часть, противника хирĕç пĕр кун хушши çапăçса, нимĕçсене халăх пурăнакан пысăк пунктран хăваласа кăларнă тата тăшман пехотин пĕр батальонне вĕлерсе пĕтернĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн боецсем противник пехотин икĕ ротине çавăрса илнĕ те вĕсене пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă.

* * *

Старший лейтенант Алексеев юлташ ертсе пыракан зенитчиксен батарейи (Хĕвеланăç фрончĕ) юлашки виçĕ эрне хушшинче тăшманăнне 7 самолет çапса антарнă.

* * *

Сталино облаçĕн нимĕçсем тытса илнĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекен Г. юлташăн партизанла отрячĕ декабрĕн юлашки икĕ эрни хушшинче темиçе ăнăçлă операци туса ирттернĕ. М. ялĕнче партизансен отрячĕ нимĕçсен чаçĕн штабне çапса аркатнă тата 4 офицера, 3 салтака пĕтерсе тăкнă. Декабрĕн 25-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле партизансем халăх пурăнакан пĕр пункт çине пырса тапăннă, унта фашистсен офицерĕсем раштав каçĕ тунă пулнă. Офицерсем вырнаçнă çурт çине гранатăсем пăрахса, партизансем фашистсен 40 офицерне пĕтерсе тăкнă. Декабрĕн 26-мĕшĕнче партизансем тăшманăн обозĕ çине тапăннă та Италин 15 салтакне вĕлернĕ, пулеметсемпе винтовкăсем тытса илнĕ. Декабрĕн 27-мĕшĕнче отряд темиçе итальянеца пĕтерсе тăкнă тата станковăй пулемет, винтовкăсемпе питех те кирлĕ документсем тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 454-мĕш полкĕн 5-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Иосиф Роберт çапла каласа панă: «Пирĕн рота халĕ тăм илсе янă салтаксенчен тăрать: кашни салтаках мĕн те пулин тăм илтерсе янă. Пĕр Зонненбург салтак кăна сиенленмесĕр юлнă. Унăн ăша çăматă пур. Анчах та унтер-офицерсене вăра 9-шне те салтаксен шăпиех пырса тиврĕ. Тăм илсе янисене врачсем нимĕнле пулăшу та памаççĕ. Полкра ĕнтĕ 30 салтак ытла шăнса вилчĕ».

* * *

Мускав облаçĕнчи Мало-Ярославец районĕнчи Ерденево ялĕнче нимĕçсен карательнăй отрячĕ 25 колхозника персе пăрахнă. Гитлерла тискер кайăксем 7 колхозникăн хăлхисемпе сăмсисене касса илнĕ, куçĕсене чиксе шăтарнă.

* * *

Çĕнĕрен илнĕ сведенисем тăрăх, Берлин хулинчи Ангальски вокзалра Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне каякан çар эшелонне тытса чарма хăтланнă хĕрарăмсене сирсе янă чухне штурмовиксем 7 хĕрарăма вĕлернĕ тата 16 хĕрарăма амантнă.

* * *

Испанири радио çапла пĕлтернĕ: Испани генералĕ Мунос Гранде испанецсен «Голубая дивизия» текен дивизине çĕнтерÿ тунă ятпа хĕрÿллĕн саламланă. Çав дивизи вырăссен хăйĕнчен «пысăкрах вăйĕсене» çĕнтернĕ пулать. Анчах пурнишĕн те çакă паллă: испанецсен «Голубая дивизия» текен дивизине пирĕн чаçсем декабрĕн варринче пуçĕпех çапса аркатнă. Испанин «Голубая дивизия» текен дивизири бандичĕсем 10.000 çын ытла вилсе, аманса тата тăм илсе янипе пĕтнĕ. Çав дивизирен тыткăна лекнĕ нумай салтаксем тата тарса каçнисем дивизин юлашкийĕсем пĕтĕмпех халсăрланса юлнине çирĕплетсе параççĕ. Салтаксем çапăçуран пăрăнаççĕ, тăван çĕршывне ăсатма ыйтаççĕ. Çапла вара Испани генералĕ «çĕнтерÿ ячĕпе» вилнĕ çынсене саламланă.

## Мускав çыннисем оборона фондне 121.091 пин тенкĕ хывнă

Çĕршыв оборонин фондне пухăнакан укçа-тенкĕ шучĕ кунран-кун ÿссе пырать. Январĕн юлашки вунă кунĕ хушшинче кăна Мускав çыннисем оборона фондне 4 миллион та 845 пин тенкĕ хывнă. Вăрçă пуçланнăранпа январĕн 12-мĕшне çитиччен столица халăхĕ Госбанкăн Мускав хулинчи конторин тĕп кассине оборона фончĕ валли мĕнпурĕ 121 миллион та 91 пин тенкĕ хывнă.

Кунсăр пуçне Мускав çыннисем çĕршыв оборонин фондне платина, ылттăн тата кĕмĕл тавраш те нумай хывнă.

(ТАСС).

## СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

### Н. П. Бочаров политрука Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа геройлăх кăтартнăшăн Николай Павлович Бочаров политрука Ленин орденĕ тата «Золотая звезда» медалĕ парса, Совет Союз Геройĕн званине парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1942 çулти январĕн 12-мĕш.

## Автозаводри комсомолецсен пуçарăвне анлăн сарса пырар!

Сталин ячĕпе тăракан автозаводра ĕçлекен çамрăксем чĕнсе каланипе сыхăнтарса, ВЛКСМ Центральный Комитечĕн секретарĕ Михайлов юлташпа Ĕç резервĕсен Главнăй Управленин начальникĕ Москатов юлташ ремесленнăй училищĕсенчи, чугунçул училищисенчи тата ФЗО шкулĕсенчи комсомол организацийĕсене, вĕренекенсене, директорсемпе производствăна вĕрентекен мастерсене пурне те çакăн пек çырупа чĕнсе каланă:

«Мускаври Сталин ячĕпе тăракан автозаводри комсомолецсемпе çамрăксем Совет Союзĕнчи мĕнпур çамрăксене Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнине производствăри çĕнĕ çĕнтерÿсемпе кĕтсе илме, фронт валли ытларах продукци туса кăларма чĕнсе каларĕç. ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе Ĕç резервĕсен Главнăй Управленийĕ, çак паха пуçарăва хĕрÿллĕн ырласа, Сталин ячĕпе тăракан автозаводри комсомолецсемпе çамрăксен пуçарăвне ремесленнăй училищĕсенче, чугунçул училищисенче тата ФЗО шкулĕсенче вĕренекен мĕнпур çамрăксен, мĕнпур работниксен ăнланса илсе сарса пымалла тесе шутлаççĕ.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе Ĕç резервĕсен Главнăй Управленийĕ училищĕсемпе шкулсенчи мĕнпур вĕренекенсемпе работниксене, Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнин ячĕпе социализмлă ăмăртăва активлăн хутшăнса, хăйсем çине, кашни училищĕпе шкулăн условийĕсене шута илсе, ĕçе лайăхлатас, фронта ытларах пулăшу памалла тăвас тĕлĕшпе конкретнăй обязательствăсем илме чĕнеççĕ. Кашни ремесленнăй училищĕн, чугунçул училищин, ФЗО шкулĕн, кашни вĕренÿ группин, кашни вĕренекенпе производство ĕçне вĕрентекен мастерăн производствăна вĕренес ĕçĕн пахалăхне ÿстерес тĕлĕшпе, Хĕрлĕ Çар валли снарядсем, минометсем, минăсем, пистолетсем, танксем, самолетсем тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсемпе боеприпассем ытларах туса кăларас тĕлĕшпе, инструментсемпе оборудование пĕлсе те тухăçлă тыткалас тĕлĕшпе, мĕнпур материалсене, топливăпа электроэнергие перекетлес тĕлĕшпе хăйсем çине конкретнăй обязательствăсем илмелле. Ремесленнăй училищĕсенчи, чугунçул училищисемпе ФЗО шкулĕсенчи кашни вĕренекенĕн хăйсем çине обязательство илсе, государство всевобуч тĕлĕшпе панă задание «хорошо» тата «отлично» паллăсемпе пурнăçа кĕртсе пымалла, йĕлтĕрпе лайăх çÿреме вĕренмелле, кашни училищĕре, кашни шкулта танксене хирĕç кĕрешекенсен групписсене хатĕрлемелле. Ремесленнăй училищĕсенче, чугунçул училищисенче тата ФЗО шкулĕсенче вĕренекен вуншар пин хĕрсемпе каччăсем вĕренÿ мастерскойĕсенче, предприятисен цехĕсенче оборона валли пысăк хавхаланупа ĕçлеççĕ. Государствăн ĕç резервĕсене тăвас паха идейăна панă çулпуçăн, çамрăксен тусĕн Сталин юлташăн чĕнĕвĕ çине вĕсем стахановла ĕçпе ответлеççĕ.

Хăйсен ĕçĕн пахалăхне ăнланса илнĕ вĕренекенсем хăйсен профессийĕсене çине тăрсах вĕренсе пыраççĕ. Свердловск облаçĕнчи Первомайски районри 6-мĕш номерлĕ ремесленнăй училищĕре вĕренекен Низов оборона продукци туса кăларас тĕлĕшпе кунран-кун 3—3,5-шер норма тултарса пырать. Киргизири детдомра çитĕннĕ Усов юлташ, çав училищĕрех вĕренекенскер, сменăра 4 нормăран кая мар тултарать. Çак училищĕрех мастер Соколов юлташ патĕнче сварщиксен ĕçне вĕренекенсен группи производство заданине тăтăшах 250 процентран кая мар тултарса пырать. Мускаври, Ленинградри, Куйбышеври, Карагандăри, Новосибирскри, Омскри, Молотоври тата ытти хуласенчи ремесленнăй училищĕсенче, чугунçул училищисенче, ФЗО шкулĕсенче вĕренекен нумай çамрăксем двухсотниксем, трехсотниксем пулса ĕçлеççĕ. Оборонăн Государственный Комитечĕн заданийĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕшĕн СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Мускаври 12-мĕш номерлĕ ремесленнăй училищĕре вĕренекен Николай Никулина «За трудовое отличие» медаль парса, Горькири 5-мĕш номерлĕ ремесленнăй училищĕре вĕренекен Зина Жамелюка «За трудовую доблесть» медаль парса наградăларĕ.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе Ĕç резервĕсен Главнăй Управленийĕ ремесленнăй училищĕсенче, чугунçул училищисенче тата ФЗО шкулĕсенче вĕренекенсемпе работниксем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа хăйсем çине илнĕ социализмлă обязательствăсене тивĕçлипех пурнăçа кĕртсе пырĕç, хăйсен ĕç тухăçлăхне татах та ытларах хăпартĕç, Оборонăн Государственный Комитечĕн заданийĕсене кăтартуллăн та срокченех тултарĕç, производство вĕренĕвĕнчи отличниксен, двухсотниксемпе трехсотниксен хисепне ÿстерĕç, хăйсем çине тăрса, тăрăшса ĕçленипе Германи фашизмне тĕппипех çĕнтерес сехете çывхартĕç тесе шанса тăраççĕ. Ремесленнăй училищĕсенчи, чугунçул училищисенчи, ФЗО шкулĕсенчи вĕренекенсем, мастерсем, преподавательсем, руководительсем! Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнине тивĕçлĕ çĕнтерÿсем тунипе кĕтсе илер! Йăлтах фронт валли! Йăлтах çĕнтерÿ валли! Сывă пултăр пирĕн çулпуç, учитель, аслă полководец—юратнă Сталин юлташ!».

## ВЛКСМ Центральный Комитетĕнче

Мускаври Сталин ячĕпе тăракан автозаводри комсомолецсемпе çамрăксем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнине тивĕçлĕн кĕтсе илессине организацилес тĕлĕшпе тунă пуçарăва ВЛКСМ Центральный Комитечĕ ырланă. Фронт валли мĕн кирлине пурне те туса парас ĕçре çак пуçару çавтери пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, ВЛКСМ Центральный Комитечĕ комсомолăн мĕнпур организацийĕсене автозаводри çамрăксен пуçарăвне комсомолецсемпе çамрăксем хушшинче пур майсемпе те сарса пыма хушнă. Совет çамрăкĕсен çак патриотла движенине комсомол организацийĕсен ертсе пымалла, социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ямалла, тăван çĕршывшăн, унăн чыслăхĕшĕн, ирĕклĕхĕшĕн тата никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешес ĕçе кашни патриотăн мĕнпур вăйне хумалла тăвас пулать. Комсомолец-активистсен, çамрăк агитаторсен Сталин ячĕпе тăракан çамрăксен пуçарăвĕ питех те пысăк вырăн йышăнса тăнине çамрăксене, мĕнпур халăха ăнлантарса памалла. ВЛКСМ Центральный Комитечĕ комсомол комитечĕсене Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа тăвакан ĕçсем пурте конкретнăй пулмаллине, вĕсене организованно, шавламасăр та йĕркеллĕ туса пыма кирлине кăтартса парать. Комсомол организацийĕсен секретарĕсем çамрăксен пуçарăвĕсене предприятин, колхозăн, учрежденин тĕп задачисене татса парас ыйтупа çыхăнтарса пыма тивĕçлĕ. Çамрăксем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене кунсеренех тĕрĕслесе пырассине организацилемелле, социализмлă ăмăртăвăн результачĕсене халăха анлăн пĕлтерсе тăмалла. Çак тĕллевпе ĕнтĕ февралĕн 1-мĕшпе 5-мĕш хушшинче активсемпе пухусем пулса иртмелле. Çав пухусенче комсомол организацийĕсен секретарĕсем хăйсен коллективĕ илнĕ обязательствăсене январь уйăхĕнче мĕнле пурнăçа кĕртсе пыни çинчен каласа параççĕ; февралĕн 20-мĕшпе 25-мĕш хушшинче туса ирттерме палăртнă пухусенче—пĕтĕм обязательствăсене мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен каласа параççĕ.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ Сталин ячĕпе тăракан автозаводри çамрăксем чĕнсе каланине кашни комсомолец ĕçпе ответ парĕ, мĕнпур çамрăксене ертсе пыраканĕ тата организацилекенĕ пулса тăрĕ, хăйĕн примерĕпе мĕнпур çамрăксене хăй хыççăн илсе пырĕ тесе çирĕп шанса тăрать. ВЛКСМ Центральный Комитечĕ комсомол организацийĕсене пурне те тăван çĕршывшăн, хамăрăн тăван халăхшăн хавхаланса кĕрешме, мĕнпур çамрăксене большевиксен партийĕ, хамăрăн çулпуç тата учитель, юратнă Сталин юлташ тавра татах та таччăнрах пĕтĕçме чĕнет.

## Нью-Йоркра совет фильмĕсен фестивалĕ пуçланнă

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 12-мĕш. (ТАСС). Январĕн 6-мĕшĕнче Нью-Йоркра совет кинофильмĕсен фестивалĕ пуçланнă. Фестивальре 20 фильм кăтартма шутлаççĕ, вĕсен шутĕнче: «Броненосец Потемкин», «Профессор Мамлок», «Александр Невский», «Чапаев», «Суворов», «Мы из Кронштадта», «Депутат Балтики», «Ленин в Октябре» тата ытти фильмсем те.

«Нью-Йорк таймс» хаçатпа ытти хаçатсем те кинофестивалĕн программине пичетлесе кăларнă.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче Совет фильмĕсем саралнăçемĕн сарăлса пыраççĕ. Америкăра нацистсене хирĕç пыракан вăрçа кăтартакан хроникăллă фильмсемпе уйрăмах интереслеççĕ.

«Нью-Йорк уорлд телеграмм» хаçатра çапла çырнă: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче 1941 çулта кăтартнă ютçĕршыв фильмĕсенчен чи лайăххи «Боевые подруги» фильм пулать, тенĕ.

## Германи çĕршывĕнчи йывăрлăхсем ӳссе пыни

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 12-мĕш. (ТАСС). «Крисчен сайенс монитор» хаçат Стамбулран илнĕ хыпарсем тăрăх çапла кăтартса парать: Германин государствăна тытса тăракан ушкăнĕсем хушшинче ӳссе пыракан шиклĕх нимĕçсен Стамбулри колонийĕнче ĕçлекенсен пурнăçĕнче те палăрать. Германире çĕркăмрăкĕ, продовольстви тата тумтир тавраш çитменни çинчен Берлинран, Софирен тата Бухарестран салхуллă хыпарсем пырса тăнипе Стамбулри нимĕçсем те хуйхăллăн çӳреççĕ. Çавăн пекех вĕсене Германи çарĕсем пысăк çухатусем тӳссе пынă пирки нимĕç салтакĕсем хушшинче дисциплина япăхма пуçлани те пăшăрхантарать. — Германия оккупациленĕ çĕршывсенчен те унти нимĕçсен кăмăлĕ ӳкнине çирĕплетсе паракан хыпарсем килсе тăраççĕ, — тесе çырать çав хаçат.—Нумаях пулмасть пĕр аманнă нимĕç офицерĕ нацистсен Болгарири госпиталĕнче пурне те илтмеллех Гитлера хурласа калаçма тытăннă. Госпитальри ытти аманнă çынсем те çак офицер сăмахĕсемпе килĕшнĕ. Госпитале часах пĕр гестапо çынни пырса, çав аманнă офицера тата икĕ салтака тытса туххса кайнă. Арестленĕ çынсене часах вĕлернĕ.

Софирен пыракан çынсем каланă тăрăх, Германи салтакĕсем хăйсен чаçĕсенче паракан краççина час-часах сутаççĕ курăнать. Салтаксем офицерсене пăхăнма пăрахаççĕ.

Охраннăй отрядсем хăйсене питĕ ирсĕр те чарусăр тыткалаççĕ. Килекен хыпарсем, — тесе çырать çак хаçат, — Германи столицинчи халăх çавтери салхуланса çитни çинчен пĕлтереççĕ. Берлинран Софи хулине пынă пĕр коммерсант хăйсен столицинчи пурнăç йывăрланса çитни çинчен каласа панă. Хĕрарăмсем пурте пекех хуйха пĕлтерекен хура тутăр сыхса çӳреççĕ, мĕншĕн тесен вĕсенчен кашниех Российăри вăрçăра е упăшкине, е тăванне-хурăнташне çухатнă. Берлинра çĕркăмрăкĕ тата тумтир çитменнипе питĕ аптăраççĕ. Нумаях пулмасть Германирен тавăрăннă Америка дипломачĕсем каласа пĕлтернĕ тăрăх, Берлинра ӳссе пыракан шиклĕхе пур ençен те асăрхама пулать.

Оверсис ньюс агентствин Анкарари корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Рур облаçĕнче пурнăç условийĕсем пĕрмаях начарланса пынă пирки кашни кун пекех вăрçа хирĕç демонстрацисем пулса иртеççĕ. Рур облаçĕнче йĕрке тытса тăма ятарласах уйрăм войскăсем илсе пынă. Çав корреспондент пĕлтернĕ тăрăхах, нумаях пулмасть Гитлер вырăнтан кăларнă генералсен ушкăнĕ вăрттăн ĕçлекен радиопередатчик тунă. Çав радиопередатчик урлă вĕсем кунсеренех Гитлер çине тапăнаççĕ.

## Нимĕç салтакĕсем ывăнса çитнĕ

Итальянецсен «Коррьере делла Сера» хаçачĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнчен килнĕ пĕлтерĕве пичетлет. Унта çапла каланă: хальхи вăхăтра нимĕç салтакĕсен тĕсĕ пит те улшăнса кайрĕ, тенĕ. Хаçат малалла çапла ӳпкелешет: «Хальхи вăхăтра эсир сатурланса çӳрекен çамрăксене курма пултараймастăр. Салтаксем те, офицерсем те хуралса, вараланса пĕтнĕ тумтирпе çӳреççĕ. Сăран аттисем çĕтĕлсе пĕтнĕ, сухалĕсене хырман. Фронтран таврăнакан нимĕç салтакĕсем, хуйхăпа хуçăлнă çынсем пек, тĕксĕм тĕслĕ, нимĕн те калаçмаççĕ. Нимĕç салтакĕсен пичĕ-куçĕнче ывăнса, тарăхса çитнĕ йывăрлăх палăрать, мĕншĕн тесен нимĕç салтакĕсене ку фронтра кашни минутăрах вилĕм кĕтсе тăрать. (ТАСС).

## Польшăри нимĕç салтакĕсем тарни

Нью-Йоркра тухса тăракан «Фолькс цейтунг» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Германин Польшăри оккупациллĕ çарĕсенчен салтаксем тарни çинчен калакан фактсем пит те нумай. Германи влаçĕсем çак дезертирствăна мĕн чухлĕ те пулин чакарас тесе чрезвычайнăй мерăсем йышăнаççĕ. Сăмахран, нимĕç салтакĕсене ахаль граждăнсен тумтирне сутакан поляксене асаплантарса вĕлермелле тесе закон кăларнă. Çакăн пек ĕçсем те нумай пулнă: нимĕç салтакĕсем çартан тарма кирлĕ ахаль граждăнсен тумтирне илмешкĕн винтовкăсемпе боеприпассене кăна мар, пулеметсене те сутнă. Çакăнпа вара Польша партизанĕсем усă кураççĕ, вĕсен аллине Германи хĕçпăшалĕ нумай лекет.

Германин Польшăри оккупациллĕ çарĕнчен нимĕç салтакĕсем тарасси нимĕçсене Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче каялла хăвалама тытăннă хыççăн питех те вăйланса кайнă. (ТАСС).

## Германин тарçисем хушшинчи хирĕçӳсем

СТАМБУЛ, январĕн 11-мĕш. (ТАСС). Лайăх пĕлекен çынсем каланă тăрăх, Германи çарĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче поражени тӳсни Германин союзникĕсем текенсем хушшинчи хирĕçӳсене вăйлатса янă. Чи малтанах Румынипе Венгри хушшинчи Трансильванишĕн пыракан хирĕçӳсем çивĕчленнĕ. Румынире тухса тăракан хаçатсем час-часах çурçĕр Трансильванине каялла Румынине тавăрса пама ыйтса çыраççĕ.

Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Румынипе Венгрире хальхи вăхăтра пĕтĕмĕшлĕ мобилизаци пырать. Çакăн пирки те ĕнтĕ Румынипе Венгри войскисем хушшинче хирĕçӳсем пуçланса каяс хăрушлăх ӳссе пырать.

## Венăри выçлăх

СТАМБУЛ, январĕн 12-мĕш. (ТАСС). Венăран килнĕ çынсем ТАСС корреспондентне Венăри пурнăç çинчен каласа панă. Нацистсем хуçаланса пурăннă пирки çак хула ĕнтĕ тахçанах хăйĕн ĕлĕкхи чапне çухатнă. Вена халăхĕ апат-çимĕç ăçтан тупса паянхи куна епле пурăнса ирттересси çинчен кăна шухăшлать. Хулари халăхăн ăшă тумтир çук, ăна ниçта сутăн илме те çук. Венăра мĕнпур продуктсене тата мĕнпур промышленность таварĕсене «эрзацсенчен» кăна туса тăраççĕ. Пуринчен ытла металл, горючи, каучук тата тир çитменни касать.

Вена çыннисем эрни-эрнипе нимĕнле продукт та илеймеççĕ. Çу сутма чарăнни ĕнтĕ 7 уйăх иртнĕ. Çăхăр вырăнне çайра хутра сахарин паркалаççĕ. Вена çыннисем чей мĕн тути каланине те манса кайнă ĕнтĕ. Топливăна уйăхра 30 килограмм параççĕ, анчах темле перекетлĕн хутсан та çак норма вăл 6—7 куна çеç çитет.

Венăра пурнăç экономика енчен питĕ йывăррине пула Венăри халăх нацистсене тарăхни ӳссе пырать. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнчен килсе тăракан çырусем çакна татах та ытларах ӳстерсе çивĕчлентерсе яраççĕ. Вена çыннисенчен нумайĕшĕсем ĕнтĕ çырусем илме пăрахнă, мĕншĕн тесен вĕсен хурăнташĕсене, тăванĕсене фронтра вĕлернĕ.

Хăвăрт çаралса пыракан çарсене Германи командованийĕ пĕр тиркесе тăмасăрах тылри халăхран илсе тултарса пырать. Венăра ĕнтĕ учебнăй заведенисен аслă класĕсенче вĕренекен ачасене те çара илнĕ. Халĕ промышленноçра ĕçлеме тесе хăварнă çынсене мобилизацилеççĕ.

Гестапо хăйĕн ĕçĕсене вăйлăн туса тăрать пулин те, Венăра саботаж тăвасси ӳссех пырать. Нумаях пулмасть хулари пĕр заводра 800 пичке бензина пĕтерсе тăкнă. Çак ĕçпе сыхăнтарса, влаçсем 20 çынна тытса хупнă та персе вĕлернĕ. Çак кунсенче хулари темиçе районра пĕр вăхăтрах телефон пралукĕсене касса татнă. Нумаях пулмасть центральнăй телеграф çине бомба пăрахнă. Гестапо икĕ вăрттăн ĕçлекен типографие йĕрлесе тупнă, çав типографисенче Гитлера хирĕçле листовкăсем пичетлесе тăнă пулнă.

## Гитлеровецсен тепĕр тискер ĕçĕ

ЛОНДОН, январĕн 12-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви Венăран илнĕ хыпарсем тăрăх гитлерла варварсен тепĕр тискер ĕçĕ çинчен пĕлтерет. Гитлерла фашистсем Маутхаузен концлагерĕнче 700 çамрăк антифашиста вĕлернĕ. Çак антифашистсене вĕлерекен газсен хăвачĕсене тĕпчесе пĕлес майпа сăнавсем туса вĕлернĕ.

## Францире фашистла террор алхасни

Францин оккупациленĕ зонинче те, оккупацилемен зонăра та, çавăн пекех тата Францин Африкăри владенийĕсенче те фашистла террор вăйланса пырать. Нацистсем хăйсен террорне пуринчен ытла Парижра вăйлатса янă. Государствăна хирĕç кĕрешнĕ тесе Парижра çак кунсенче фашистсен сучĕ 5 çынна кашнине 8 çуллăха каторгăна ямалла тунă. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем çине тапăнасси Парижра нумайлансах пырать. Çавăн пирки нимĕçсен Парижри влаçĕсем Париж халăхне январьтен пуçласа каçхине 5 сехет иртсен урама тухма чарнă. Студентсем Парижра забастовка организацилеме тăнине фашистсем тискеррĕн пусарса лартнă. Америка хаçачĕ «Нью-Йорк таймс» пĕлтернĕ тăрăх, студентсем пуçарса янă демонстрацири халăх çине нимĕçсем пулеметсенчен пенĕ, 32 студента вĕлернĕ тата нумайĕшне амантнă.

Франци-провинцийĕнчи хуласенче Германие хирĕç пыракан движени активланнăçемĕн активланса пырать.

(ТАСС).

## Франци çарне Германие хирĕç тăракан офицерсенчен тасатаççĕ

ЖЕНЕВА, январĕн 11-мĕш. (ТАСС). Кунта илнĕ тĕрĕс хыпарсем çакăн çинчен пĕлтереççĕ: нимĕçсем Виши правительствине 1942 çулти январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Франци çарĕнчен отставкăна кăларса ямалли аслă офицерсен списокне тăратнă. Халĕ çак список тăрăх Франци çарĕнчи офицерсене массăллăн кăларса ярас ĕç пырать. 1942 çулти январĕн 1-мĕшĕнче 42 генерала пенси çине куçарнă. Германин информациллĕ бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, 42 француз генералне вырăнтан кăларни—пĕтĕм Франци çарне тата çарăн администрацине урăхлатас ĕçĕн пуçламĕшĕ кăна-ха. Тĕнĕл держависен çар çыннийĕсемпе çыхăнса тăракансем каланă тăрăх, Франци çарĕнчи аслă офицерсене вĕсем Дарлана пăхăнса ĕçлемелли политикăпа килĕшменшĕн тата Германи Францин тинĕс-çар флотне, çавăн пекех тинĕс-çарĕн базисемпе те усă курма ыйтнине хирĕç тăнăшăн вырăнтан кăлараççĕ.

## Англипе Германи хушшинчи вăрçă

ЛОНДОН, январĕн 10-мĕш. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: январĕн 9-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕ Брест хули çине çĕнĕрен пырса тапăннă. Çавăн пекех тата Шербургри доксем çине те бомбăсем пăрахнă. Çав каçах кăнтăр-хĕвеланăç Англи çинче противникăн нумай мар самолечĕсем вĕçсе çӳренĕ. Тинĕс хĕрринчи икĕ пункт çине пăрахнă бомбăсем пысăк мар сиен тунă. Жертвăсем пур.

## Ливири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, январĕн 12-мĕш. (ТАСС). Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи командованийĕн коммюникинче çапла пĕлтернĕ: январĕн 11-мĕшĕнче, çанталăк начаррине пăхмасăрах, Англи войскисем Эль-Агейла районĕнче чакса пыракан противника вăйлăн пырса хĕснĕ. Англи авиацийĕ тăшманăн обозĕсемпе автотранспортне аркатас тĕлĕшпе уйрăмăнах ăнăçлăн ĕçленĕ. Хальфая районĕнче, противник гарнизонне хупăрласа илнĕ вырăнта, нимĕçсемпе итальянецсене çĕр сынна яхăн тыткăна илнĕ.

## Малайăри çапăçусем

ЛОНДОН, январĕн 10-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин Сингапурти корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: японецсем англичансен Куала-Лумпуртан çурçĕр енчи позицийĕсене çаплах вăйлăн хĕссе пынă, икĕ енĕ те пысăк çухатусем тӳснĕ. Японецсем англичансене Куала-Лумпур патне çитиччен чакарас тесе пĕтĕм вăйĕсене хураççĕ пулмалла. Японецсем çапăçăва 10—12 тоннăллă танксене кĕртеççĕ, вĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте англичансем танксене хирĕç пемелли пăшалсемпе ăнлăн усă кураççĕ. Пысăк танксене японецсем малти линие англичансен позицийĕсем урлă çул хывма кăларса яраççĕ. Танксем хыççăн грузовиксем çине тиенĕ пехота пырать. Анчах та питех те йывăр танксен хĕллехи аслă çулсем тăрăх çеç пыма лекет, кунта вĕсене артиллери те вăйлăн çапма пултарать.

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 10-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Куала-Лумпур хулинчи (Малайя) корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, кунти европеецсенчен нумайĕшĕсем çак хуларан тухса кайнă. Нумай магазинсене хупнă. Каучук плантацийĕсене тата хатĕрленĕ каучук запасĕсене çунтараççĕ. Çавăн пекех нумай фабрикăсене, тăхлан руди кăларакан вырăнсене тата кĕперсене ишĕлтереççĕ. Продовольстви запасĕсене вырăнти халăха валеçсе параççĕ.

Корреспондент каласа панă тăрăх, японецсен пысăк мар, анчах та нумай ушкăнĕсем англичансен Куала-Лумпуртан çурçĕрпе хĕвеланăç енчи позицийĕсене пĕрмаях атакăлаççĕ. Японин ахаль çынсем пек тумланнă войскисем, пысăк йышсемпеле, джунгли урлă каçаççĕ (вĕсенчен нумайĕшĕсем мотоциклетпа). Пысăках мар танксем каучук плантацийĕсем урлă каçаççĕ. Çав вăхăтрах Японин пикировка тăвакан бомбардировщикĕсем кунти районăн тĕрлĕрен пункчĕсем çине вĕçсе пырапыра тапăнаççĕ. Халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем нумай шутланаççĕ.

## Ĕçсыннисем В. М. Молотов юлташ нотине сӳтсе-яваççĕ

### Пĕтĕм вăя—тăшмана çĕнтернĕ çĕре

Шупашкарти пир-авăр фабрикинче ĕçлекен рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем январĕн 10-мĕшĕнче «Германи влаçĕсем хăйсем тытса илнĕ совет территорийĕсем çинче пур çĕрте те халăха çаратса юхăнтарни çинчен тата тискер кайăкла çавтери хăрушă ĕçсем туни çинчен» пĕлтерсе каланă В. М. Молотов юлташăн нотине тимлĕн вуласа тухрĕç. Нимĕç фашисчĕсен вăрă-хурахла ĕçĕсем ĕçсыннисенче вĕçĕмсĕр курайманлăх çулăмне чĕртеççĕ. Юнлă тискер ĕçсемшĕн, пирĕн чечекленекен пурнăç çине ирсĕр алă хунăшăн, совет граждăнĕсен айăпсăр тăкăннă юнĕшĕн совет халăхĕ нимĕç фашисчĕсене пĕтĕмĕшпех ответ тыттарĕ.

— Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ, нимĕç фашисчĕсен вăрă-хурахла çарне çĕмĕрсе, çĕнĕрен те çĕнĕ хуласемпе ялсене ирĕке кăларса пырать. Çитĕ вăхăт, пирĕн Хĕрлĕ Çар нимĕç фашисчĕсен вăрă-хурахсенчен, çынвĕлеренсенчен, политикăллă бандитсенчен пухнă çарне тĕппипех пĕтерсе тăкĕ. Килĕ вăхăт, пирĕн ирĕклĕ пурнăç çине хăйсен юнлă аллине тăснă сехете нимĕç фашисчĕсен атаманĕсем хăйсемех ылханĕç,—теççĕ рабочисем, хăйсем йышăннă резолюцире.—Нимĕç фашисчĕсен тискер ĕçĕсене этемлĕх нихăçан та манмĕ. Вĕсен ячĕ ĕмĕр-ĕмĕр намăс юпи çумĕнче тăрĕ. Пирĕн хĕрӳ курайманлăх йăхран йăха юлĕ.

Пир-авăр фабрикинче ĕçлекенсем нимĕç фашисчĕсен тискер ĕçĕсене хирĕç ответлесе, хăйсен пĕтĕм вăйне, пĕтĕм пултарулăхне нимĕç фашисчĕсене хăвăртрах пĕтерсе тăкма, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне пур енĕпе те татах та вăйлăнрах пулăшма пулчĕç.

* * *

Ленин ячĕпе тăракан фабрикăра ĕçлекенсем хушшинче агитаторсем Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн В. М. Молотов юлташăн нотине вуласа пачĕç.

Рабочисемпе работницăсем В. М. Молотов юлташ янă нотăна ырласа партипе правительство тавра татах та таччăнрах пĕтĕçсе тăраççĕ. Хĕрлĕ Çара ĕçлĕн, татах та вăйлăнрах пулăшма хатĕр тăнине кăтартса параççĕ.

Молотов юлташăн нотине швейпромсоюзра, индпошив мастерскойĕнче, промсоюзра ĕçлекен рабочисем, служащисем хушшинче те вуласа, сӳтсе явнă.

И. ГРИГОРЬЕВ.

## Осоавиахимăн 15-мĕш лотерейин выигрышĕсене тӳлеме тытăннă

### Служащи Трофимов автомашина выляса илнĕ

Осоавиахимăн Пĕтĕм Союзри 15-мĕш лотерейин билечĕсем тăрăх тухнă выигрышсене Мускавра тата Совет Союзĕн ытти хулисенче те тӳлеме тытăннă.

Çак кунсенче Осоавиахимăн Мускав хули советне Кировски районри финанс отделĕн служащийĕ В. Г. Трофимов пырса хăйĕн лотерея билетне кăтартнă. Тираж таблици тăрăх тĕрĕслесе пăхсан, Трофимов билечĕ питех те пысăк выигрыш — 7000 тенкĕ тăракан пĕчĕк литражлă автомобиль выляса илнине палăртнă. (ТАСС).

## Кроса хатĕрленеççĕ

СОВЕТСКОЕ. Профсоюзпа комсомолăн Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пулакан йĕлтĕрлĕ кросне ирттерме хатĕрленесси пысăк ăнăçлăхпа пулса пырать.

Кроса ирттерме хатĕрленнĕ май райцентрта 4 хутчен тренировка туса ирттернĕ, унта çынсем нумай хутшăннă. Çав тренировкăсенче уйрăмăнах Н. Логинов тата И. Иванов юлташсем аван тĕслĕхсем кăтартнă.

Тренировка ирттерессине ялсенче те туса пыраççĕ. Шĕмшешре ирттернĕ тренировкăна 200 çын ытла хутшăннă. Кунти комсомолецсемпе çамрăксен пурин те йĕлтĕрсем пур.

Я. СИГАЙ.

## Чăваш писателĕсем Н-ски часть боецĕсем патĕнче

Юлашки вăхăтра чăваш совет писателĕсем Хĕрлĕ Çар чаçĕсем патĕнче литературăллă вечерсем ирттерме тытăнчĕç. Январĕн 12-мĕшĕнче Действующи армин Н-ски чаçĕн боецĕсем патĕнче те çак вечер пулса иртрĕ. Боецсемпе командирсем тата политработниксем ыйтнипе историк П. Г. Григорьев юлташ «Чăваш халăхĕн авалхипе хальхи пурнăçĕ çинчен» интереслă доклад туса пачĕ. Доклад хыççăн чăваш халăх поэчĕ, орденоносец Н. И. Шелепи фашизма хирĕç çырнă сăвăсем тухса каларĕ. Поэт С. А. Шавлы хăйĕн сăввисене тата вырăс халăхĕн чаплă поэчĕн В. В. Маяковскин сăввисене вуласа пачĕ, Мускавран килнĕ писательница К. С. Арсенева юлташ граждăн вăрçи çинчен çырнă сăвăсене каларĕ.

Вечерта боецсемпе командирсем тата политработниксем нумай пулчĕç. Вечер боецсене кăмăла кайрĕ. Вĕсем ыйтнипе çакăн пек вечер январĕн 16-мĕшĕнче те пулса иртмелле.

## *Вилнисем кăтартса пани*

Пысăк ял варринче çӳресе такăрлатнă мăн çул çинче масар сарăлса выртать. Кашни виле шăтăкĕ çине нимĕçсем типтерлĕн хĕрессем лартнă. Хĕрессем çине нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен ячĕсене çыра-çыра хунă. Вăл салтаксемпе офицерсем юнлă «фюрерăн» ют çĕршывсене тискеррĕн туртса илес идейисемшĕн ниçетри Российăн юрĕсем ăшĕнче пуçĕсене хунă. Гитлерла бандăсем, Хĕрлĕ Çар хаяррăн пыра-пыра çапнинчен хăтăлас тесе, йĕркесĕррĕн каялла чакса пыраççĕ. Вĕсен çулĕ çинче пинĕ-пинĕпе масар хĕресĕсем кăна ларса юлаççĕ.

Халĕ гитлеровецсем хăйсен вилнĕ салтакĕсене пытарма та ĕлкĕреймеççĕ ĕнтĕ. Шăнса хытнă нимĕç салтакĕсен виллисем юр ăшĕнче е çул хĕррисенче çаплипех йăваланса выртаççĕ. Ку ĕнтĕ—Гитлер ССР Союзне хирĕç пуçласа янă крестовăй походăн планĕсем ăнăçсăррăн арканса кайнине нимĕн сăмахсăрах лайăх кăтартса паракан тĕслĕх.

Вĕсем хăйсем вилнĕ хыççăн пахха документсем хăварнă. Пирĕн чаçсем çĕмĕрсе тăкнă хыççăн вилнĕ е тыткăна лекнĕ салтаксем çумĕнче темиçе пин çырусем, дневниксем тупаççĕ. Вилнĕ çынсем питех те витĕмлĕн те ĕнентерӳллĕн кăтартса параççĕ. Эпир пăхса тухнă 1721 çыруран 16-шĕ кăна (пĕр процентран та кая!) салтаксен патриотла кăмăлне палăртаççĕ; анчах вăл çырусенче те гитлерла Германи çине çывхăнса тытса чарайми вăйпа капланса килекен катастрофăран хăраса чĕтĕрени сисĕнет.

Грабах хушаматлă тăвансен сĕтел-пукан фабрикинчи фашистла дружинăн членĕ хăйне пĕрле ĕçлекен çывăх тусне, унтер-офицер Пауль Вахтенгарса çапла çырса ăнлантарать: «Сан çырăву пире мĕн тери шиклентерсе пăрахни çинчен эсĕ шутласа та илейместĕн пулĕ. Нимĕçрен ытларах пире хамăр дружинăн паччăклă членĕ Гергард Вюрбер вилĕмĕ хуйха ячĕ. Çапла, хаклă Пауль, çавнашкалах ĕнтĕ хальхи вăрçă: инкек хыççăн инкек».

Ефрейтор Бруна Веллицер хăйĕн юлташĕ Вартвегер патне çапла кӳренсе шанчăксăррăн çырса пĕлтерет: «Большевизма хирĕç пыракан çапăçура пирĕн çамрăксене питĕ пысăк хĕнхур тӳссе ирттерме тивни çинчен сана анлă каласа пачĕ пулĕ. Российăра пирĕн кунçулсем çывхарса килеççĕ».

Çапла ĕнтĕ, рай пачах урăхла иккен.

Хĕрлĕ Çар чаçĕсем вăйлăн та хаяррăн пыра-пыра çапнипе нимĕç салтакĕсен кăмăлĕ-туйăмĕсем улшăнчĕç. Салхулăхпа пăшăрхану çавăрса илме пуçларĕ Германи тылне.

Иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнче «Красный Октябрь» совхоз патĕнчи çапăçура нимĕç войскисем, пирĕн боецсем хăйсене вăйлăн çапса хĕснине сирсе ярас тесе, пĕтĕм халран кайса тапаçланса пăхрĕç. Çак çапăçура пулнă нимĕç салтакĕ Вернер Шит, 291-мĕш пехотнăй дивизире 506-мĕш полкра тăнăскер, декабрĕн 15-мĕшĕнче хăйĕн тăванĕсем патне çапла çырнă пулнă: «Хаклă Редипе Ганс! Ĕнер пире каллех телей пулмарĕ: эпир, темиçе çын, почтăна кайма тухнăччĕ, пирĕн çине сасартăк вырăссем тапăнчĕç. Пирĕнтен пĕри вилчĕ, виççĕшĕ аманчĕç. Нумайччен ларма тивĕ-ши пире кунти позицире? Çак хĕлте вăрçă чарăнĕ-ши? Çапла, хаклă Реди, эпир ку вăхăтчен сывах юлнăшăн тӳрра мĕнле тав тумаллине те пĕлместĕп. Эпир хамăра сайра хутра кăна тĕл пулакан телейлĕ этемсем тесе шутлама пултаратпăр. Çи-пуçпа апат-çимĕç енчен пурнăç çаплах аванланмасть-ха. Сăран атăсем ку вăхăтчен те илеймерĕм, кĕпе-йĕм тавраш çук, пире часах пыйтăсем çисе яраççĕ пулĕ. Ман ӳт-тирĕм пĕтĕмпех кăрчанкăланса кайрĕ. Хăпса тухайăпăр-ши эпир кунтан хăçан та пулсан каялла, Германие пыма çул çине тухайăпăр-ши, е çакăнтах нӳрĕ тăпра ăшне выртса юлăпăр-ши?»

Германи çарĕн çĕнтерĕвĕсем çинчен Геббельс шутласа кăларнă суяна тылра та, фронтра та ĕненме пăрахса пыраççĕ. Хаяр та йывăр пурнăç фашистсен пропаганди минретнĕ нимĕç халăхĕн пуçĕнчи сĕрĕме хăех сирсе ярса пырать. Эрих Вюрцбург ноябрĕн 15-мĕшĕнче ефрейтор Вильгельм Костер патне çапла çырать: «Мана ку çĕнтерӳсем те пĕтĕмпех йăлăхтарса çитерчĕç. Эсĕ хăвăр ротăра вунă çынна яхăн çеç тăрса юлчĕç, тесе çыратăн. Паллах, ку вăл питех начар япала».

Гитлер пуçласа янă юнлă вăрçă кама кирли çинчен, вăл нимĕç халăхне ăçта илсе çитересси çинчен нимĕç обывателĕ халлĕхе сайра хутра тата шикленерех кăна шухăшлать.

Остербун хулинче пурăнакан арăмĕнчен Вальтер Брeнт çакăн пек çыру илсе вуланă: «Ку вăрçă кама кирлине тата вăл мĕнле пулса пĕтессине эпир нимĕн те ăнланаймастпăр. Нумаях пулмасть радио тăрăх Хĕвеланăç фронтĕнче пĕр армин командующийĕ генерал Шебур вилни çинчен пĕлтерчĕç. Тăвансемпе палланă çынсенчен кам та пулин вилни çинчен пĕлтермесĕр пĕр кун та иртмест».

Нимĕç салтакĕсем килĕсенчен илекен çырусем, кашни çырăвĕ тенĕ пекех, Хĕвелтухăç фронтĕнче Германи çарĕн çухатăвĕсем ӳснĕçемĕн ӳссех пыни çинчен калаççĕ. Нумаях пулмасть çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсем мĕн чухлĕ пĕтнине кăтартакан список тупнă. Вăл списока нимĕçсен 291-мĕш пехотнăй дивизийĕн 506-мĕш полкĕн салтакĕсем вăрçăн малтанхи кунĕнчен тытăнса декабрĕн 15-мĕшне çитиччен мĕн чухлĕ вилсе пынине çырнă: «Июнĕн 22-мĕшĕнчен пуçласа декабрĕн 15-мĕшне çитиччен ротăран çакăн чухлĕ халăх чакрĕ: вилнисем 59, аманнисем 139, чирлисем 3, нимĕн хыпарсăр çухалнисем 84».

Нимĕç оккупанчĕсене саванăçлă перспективăсемех кĕтмеççĕ: фронтра—вилĕм, килте—выçлăх та чи начар пурнăç. Çакна витĕрех туйса тăни гитлерла Германин фрончĕпе тылĕ хушшинче çӳрекен çырусенче ытларах та ытларах палăрса пырать.

Ефрейтор Вальтер Ган патне унăн амăшĕ çапла çырать: «Çу тавраш халĕ пирĕн пачах та çахал. Çăра çĕрулмипех тăранса пурăнма çук. Çакна пула пирĕн ачасем питех те хурлăх кураççĕ. Вĕсем хушшинче тĕрлĕ чир-чĕрсем сарăлса пыраççĕ. Уйрăмăнах параличпа рахит чирĕсем сарăлса кайрĕç. Çакăн пирки сурхуричченлĕхе пур шкулсене те хупса хучĕç. Кăмăл-туйăмсем пирĕн хамăрăн та питĕ начар. Эпир пурте çак хăрушă вăрçă хăвăртрах чарăнасса кĕтетпĕр, анчах та, пирĕн инкекĕмĕре, халĕ унăн вĕçĕ-хĕрри пăхса та курăнмасть-ха. Эпир Российăран илсе тăракан хыпарсем пире нимĕн ыррине те сунмаççĕ».

Курт ятлă хулара пурăнакан хĕрарăм Гохванд хăйĕн салтакри ывăлĕ патне çакнашкал чуна ыраттаракан сăмахсемпе çыру çырса янă: «Сире урăх çыхсем ярса улăштармаççĕ, вăрçăн вĕçне те курма çук. Эсир пурсăр та чирлесе вилсе пĕтичченех çапла пулать пулĕ вăл. Кама кирлĕ-ши çак нимĕн тĕлсĕр-тăрлавсăр вăрçă?»

Фашистла цензура салтаксем хăйсен çырăвĕсенче вăрçă йывăрлăхĕсем пирки ӳпкелешсе çырнă вырăнсене пĕтĕмĕшпех хуратса пырать. Çапла тăвать пулин те, вăл Гитлерăн юнлă авантюрине хирĕç протестлесе калакан тăвăла çиелле те пытараймасть. Çак тĕлĕшрен нимĕç салтакĕ Вернер ноябрĕн 25-мĕшĕнче хăйĕн арăмĕнчен илнĕ çыру питĕ характерлă. Вернер арăмĕ çапла çырать: «Российăри вăрçă—чи хăрушă япала. Пирĕн салтаксене хаяр хĕлĕн шартлама сиввисене чăтса ирттерме тивет. Вĕсем сивве тӳсме хăнăхман. Ун çинчен уççăн калаçма юрамасть, калаçни те усăсăр. Пурпĕрех пулăшас çук. Çавăнпа та ĕнтĕ çак хăрушă вăхăта мĕнле те пулин тӳссе ирттересех пулать, нимĕнрен ытларах шăла çыртса пурăнма тăрăшас пулать. Çапах пурĕпĕр вăрçă хăçан та пулин пĕтетех: ĕмĕрех тăсăлмĕ вăл».

Аманнă тискер кайăк сыввинчен икĕ хут хăрушăрах. Ăна мĕн чухлĕ ытларах кӳпкетĕн, вăл çавăн чухлĕ ытларах хаярланса пырать. «Пирĕннисен никама та тыткăна илмелле мар, пĕтĕмĕшпех персе вĕлермелле»,—тесе çыраççĕ унтер-офицер Крут Вильд патне хăйĕн хурăнташĕсем. «Венгельс Вилли пĕррехинче çапла каларĕ: Вырăссем патне тыткăна лексе, вĕсен салтакĕсем пирĕн патра тыткăнра пурăнакан пурнăçпа пурăнас пулсан, эпĕ луччă хама хам вĕлернĕ пулăттăм, терĕ. Вăл вара нихăçан та хăйĕн сăмахĕсене пуçпа шухăшласа пăхмасăр каламасть»,—тесе пĕлтереççĕ Мюллер унтер-офицера килĕнчен.

Гитлер çарĕн çак çырăвĕсемпе документсем Хĕрлĕ Çарăн хăватлă вăйне пула сĕрĕмрен уçăлма пуçланă тăшманăн сăн-сăпатне кăтартас енчен питех те хаклă материал параççĕ. Нимĕç салтакĕсен пуçĕнчи сĕрĕме пĕртен пĕр меслетпе кăна хăвăртрах сирсе яма пулать. Вăл—Гитлерăн урнă йыттисене нимĕн хĕрхенмесĕр вĕлерсе пĕтересси, фашистла ирсĕрлĕхе пĕтĕмпех çунтарса пĕтерсе, кĕлне çилпе вĕçтерсе ярасси.

Л. ГАНИЧЕВ.

(«Правда» хаçатран).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 6—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 6—85, издательство контори [illegible]—23.

НТ 13 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 2, Ф 6. 58 84 п. л.